Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕслетпĕр

# Техника кивелни ун çине алă сулмаллине пĕлтермест

Çапла пĕтĕмлетӳ турăмăр эпир иртнĕ тунти кун, октябрĕн 30-мĕшĕнче, "Герой" ял хуçалăх производство кооперативĕнче кăçалхи уйхир ĕçĕсене хутшăннă техникăна епле управа лартнипе, çак ĕçе те ответлăха туйса пурнăçлакан механизаторсемпе-юсавçăсемпе тата инженери ĕçченĕсемпе тĕл пулса калаçнă хыççăн.



– Паян-ыран пирĕн çак техникăпах ĕçлемелле-ха, юхăнтармасăр ĕçлемелле, унпа пĕрлех çĕнни пирки шутламалла. Эпир çапла тăватпăр та. Акă, кăçалхи вырмана хутшăннă çĕнĕ ДОН-1500 "хир карапĕ" пирĕн çул тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕ. Çухатусене куç умĕнчех пĕчĕклетрĕ, тухăçпа ĕç хăвăртлăхне ӳстерчĕ, пĕр çĕр лаптăкех çĕнĕ техникăпа тата çĕнĕ технологипе ĕçлесен пысăкрах тупăш пама пултарнине кăтартрĕ. Кунпа пĕрлех кăçалхи çанталăк условийĕсем техникăна ГОСТпа килĕшӳллĕ упрани ĕçсене вăхăтра пурнăçлама çул уçнине куç умне кăларнине те пытарма кирлĕ мар,– терĕ механизаторсем хĕллехи управа лартнă техникăна пирĕнпе пĕрле пăхма тухнă май хуçалăх ертӳçи Ростислав Николаевич Тимофеев **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)**. Хуçалăх çĕнни патне туртăннине автопаркра ларакан анчахрах илсе килнĕ "Карпатец" погрузчик та çирĕплетрĕ.



– "Герой" хуçалăх техника упрассипе Муркашсемшĕн çеç мар, республикăшăн та юлашки çулсенче тăтăшах ырă тĕслĕх пулнине, Шурчара техникăпа ĕçлеме тата унăн ĕмĕрне вăрăмлатма вĕренмелли чылайăйине эпир те курса тăратпăр,– терĕ техникăна хĕллехи управа лартнине республикăри комиссипе пăхма килнĕ Владимир Павлович Димитриев. Мĕнех, Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕн сăмахĕсене управа лартнă техникăн кашни единицинех вăл тĕплĕ тишкерсе хакланăран ыт ахальтен калана теес килмест.



Шурчасем техникăна управа тĕплĕ лартнине техника патĕнчи тирпейлĕх те çирĕплетет. Шуратнă кустăрмасем, çу сĕрнĕ хыççăн полиэтилен хутпа чĕркенĕ штоксем, плугсен дизель çăвĕпе сĕрнĕ лемехĕсем, сăнчăрсемпе ятарлă тĕревсенчен çакса янă культиваторсем, управа лартнă техника пĕтĕмпех пĕр ретре ларни, вĕсем таврашĕнче шитрен вăрăмрах çум курăкĕ пулманни, пĕрремĕш сеялка юсава кĕрсе ларни "Герой" хуçалăхăн техника паркĕнче тăрăшулăхпа тирпейлĕх хуçаланни çинчен калаççĕ. Вăл вара ĕçлемесĕр пулмасть. Акă, республикăран килнĕ комисси пурнăçланă ĕç пахалăхĕпе паллашнă вăхăтра та техника таврашĕнче ĕç лăпланмарĕ. Вунă çул вырмана жаткăпа хутшăнакан Николай Васильев, авă, юлашки сехетченех техникăна управа лартассипе тимлерĕ **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**. "Çулленех çапла тăрăшатпăр та, ку ĕç пирĕншĕн ют мар ĕнтĕ. Управа лайăх лартнă техникăпа çитес çул хамăра ĕçлемех ансат пулать. Çакна кашнинех ăнланатпăр, ăнланатпăр та ĕçлетпĕр",– тет ĕçрен уйрăлмасăр Николай Ильич. Тирпейлĕхе аслисенчен алла илекен Владимир Степанов та **(виççĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**, хăй виççĕмĕш çул çеç тракторпа ĕçлет пулсан та, ĕçленĕ техникăна управа лартассине ытлашши ĕç тесе шутламасть. "Техника пире тăрантарать, апла пулсан пирĕн ăна куç шăрçине упранă пек упрас пулать",– тесе ĕçлерĕ вăл техникăна управа лартнă çĕрте. Николай Никифоровпа Юрий Евдокимов тантăш механизаторсем, 9-мĕш çул вĕсем хуçалăх ĕçĕсене тракторпа хутшăнаççĕ. Юрий юлашки çулсенче ашшĕпе пĕрле комбайнпа вырмана та хутшăнчĕ. Ĕçре хастарскерсем техника упрасси çине те пӳрне витĕр пăхмаççĕ **(тăваттăмĕш сăн ӳкерчĕкре)**.



– Такамшăн мар, хамăршăн ĕçлетпĕр,– çакăн пек пĕтĕмлетӳ туса ĕçлеççĕ тата хĕле кĕреççĕ "Герой" ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçисем, механизаторĕсемпе водителĕсем, юсавçисем. Çакнашкал çула суйламасăр нимĕнле наци проекчĕ те никама та пысăк пулăшу параймĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкрчĕкĕсем.**

"Сывлăх" наци проекчĕ

# Хамăр сывлăхшăн хамăрăнах тăрăшас пулать

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

**– Çак наци проекчĕ тĕрлĕ чиртен сыхланас ĕçе те ырă варкăш илсе кĕчĕ. Çапла вĕт, Владислав Григорьевич.**

– Наци проекчĕн 3-мĕш енĕн пĕлтерĕшĕ шăпах çакăнта: çынсене тĕрлĕ чиртен прививкăсем тăваси – вакцинопрофилактика. Укçа-тенкĕ çитменнипе эпир ачасене те, çитĕннисене те вăл е ку чиртен кирлĕ пек прививкăсем тăвайман. Тĕслĕхрен, В гепатитран. Наци проекчĕпе вара çак хăрушă чиртен прививка тума района тӳрех вакцинăсем килсе çитрĕç. 5528 ачана эпир май уйăхĕнче 2 хутчен прививка турăмăр ĕнтĕ шкулта. Виççĕмĕш прививкăна сентябрьте-октябрьте 4567 ачана тунă ĕнтĕ: 86 процент. Ку ĕçе ноябрьте вĕçлетпĕр. Пĕтĕмпе 1 миллион та 200 пин тенкĕлĕх. Çакă калама çук пысăк пулăшу. В гепатит мĕн тери хăрушă чир иккенне шутласан, пушшех те. Унпа чирленĕ хыççăн пĕвер ĕмĕрлĕх сусăрăнса юлать. Прививка тунă хыççăн вара 15-18 çул хушши çав ачасен унпа чирлес хăрушлăх çук. Каласа хăвармалла, çак таранччен тата 1603 ачана хĕрлĕ шатраран прививка турăмăр. Çавăн пекех ача амăшĕ пулма хатĕрленекен хĕрарăмсене те.

Мĕн лайăх тата çак наци проектĕнче? Вăл пĕр çуллăх çеç марри. Çитес çул, акă, В гепатитран 15-35 çулсенчи çамрăксене те прививка тума палăртаççĕ.

Наци проекчĕпе килĕшӳллĕн ача сачĕсене çӳрекен, шкулта 1-4 классенче вĕренекен 2810 ачана пурне те грипран тӳлевсĕр прививка турăмăр. Çавăн пекех – ватă çынсемпе ветерансене те, вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсене, 5-11 классенче вĕренекенсене. Ку ĕç пуçланчĕ ĕнтĕ.

Наци проекчĕпе килĕшӳллĕнех полиомиелитран прививка тăватпăр.

**– Халĕ вара наци проекчĕн 4-мĕш енĕпе халиччен мĕн туни çинче чарăнни вырăнлă пуль.**

– Вăл вара 35-55 çулсенчи çынсене хушма диспансеризаци витĕр кăлармалла ыйтать. Çавăнпа та халĕ бюджет сферинче ĕçлекенсем, вĕрентӳ, культура, сывлăха сыхлас ĕç, социаллă хӳтлĕх тата наука ĕçченĕсем хушма диспансеризаци витĕр тухаççĕ.

Каласа хăвармалла, хушма диспансеризаци вăхăтĕнче çынсем, терапевтпа ытти специалистсемсĕр пуçне, невролог, эндокринолог, уролог, хирург патĕнче те сывлăхне тĕрĕслеттереççĕ. Унсăр пуçне 40 çултан иртнĕ хĕрарăмсем сĕт парĕсене УЗИ тĕрĕслеттереççĕ. Çакă асăннă ӳсĕмри хĕрарăмсем час-часах тĕл пулакан чирне вăхăтра палăртса сиплеме май парать.

Çак хушма диспансеризацие ирттерме ытти районсенче е уролог, е эндокринолог çук пулсан, пирĕн районта пур специалистсем те пур. Элĕк районĕ, акă, халăха хушма диспансеризаци витĕр кăларас ĕçре уролог тĕрĕслевĕ пирки пирĕн районпа килĕшӳ турĕ. Çавăн пекех эндокринолог, уролог пулăшăвĕ кирлĕ пирки Хĕрлĕ Чутай районĕ пирĕнпе килĕшӳ турĕ. Ку енĕпе Етĕрне районĕ те пирĕнтен пулăшу ыйтрĕ.

Хушма диспансеризаци çынсен чирне малтанхи тапхăрта тупса палăртма, сиплев ĕçне вăхăтра пуçлама май парать. Ку вара – чи кирли. Наци проекчĕпе килĕшӳллĕн çак специалистсем патĕнче тĕрĕсленнĕ кашни çын пуçне 500-шер тенкĕ укçа уйăраççĕ. Çав сумма химреактив илме, тĕпчев тунă çĕре, çав врачспециалистсен ĕç укçине ӳстерме çĕре каять.

Паллах, çынсен сывлăхне пур енлĕн тĕрĕслеме тивĕçлĕ медицина оборудованийĕ кирлĕ. "Акатуйра" ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров вĕсен свидетельствисене пире пачĕ ĕнтĕ. Вĕсенчен çурри ытла килсе çитрĕ районa. Çав шутран лаборатори оборудованийĕ 2 комплект, УЗИ аппарачĕсем 3 (1 миллион та 300 пин тенкĕлĕх), "Васкавлă пулăшун" 3 автомашини пĕтĕм комплектпа. Çакнашкал тепĕр 3 машина республика программипе килĕшӳллĕн Пĕтĕм тĕнчери аталану банкĕ урлă килсе çитрĕ. Унсăр пуçне 7 ЭКГ аппарачĕ килсе çитрĕ. Çавăн пекех 2 миллион та 400 пин тенкĕ тăракан Японире туса кăларнă рентген аппарачĕ илсе килнĕ. Наци проекчĕ пулман пулсан, ăна туянма вăй çитерме йывăрччĕ, паллах.

Çулталăк хушшинче наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пама шантарнă медицина оборудованийĕ пирĕн района каланă пекех килсе çитет. Пĕтĕмпе 5 миллион та 499 пин тенкĕлĕх. Çакă хăех "Сывлăх" наци проекчĕ пурнăçа пысăк хăвăртлăхпа кĕнине çирĕплетсе парать. Ку çеç те мар. Вăхăт иртнĕçемĕн унпа килĕшӳллĕн паракан çăмăллăхсем хушăнсах пыраççĕ: оборудовани те, медицина ĕçченĕсен ĕç укçи те. Çитес çул ку тĕлĕшпе ĕмĕтсем татах та пысăкрах.

Тата çакна палăртмалла. "Сывлăх" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн çăмăллăхсемпе усă куракан халăхăн уйрăм категорийĕсене кирлĕ эмелсемпе тӳлевсĕр тивĕçтереççĕ. Районти 12 точкăра çак ĕçе йĕркеленĕ. Кун пекки урăх ниçта та çук. Вăрçă участникĕсем, инвалидсем тата çак категорие кĕрекен ытти çынсем район центрне каймасăрах хăйсене кирлĕ эмелсене вырăнсенчех туянаççĕ.

Енчен те федераллă шайри çăмăллăхсемпе усă куракансене пĕлтĕрхи çур çулта 2 миллион тенкĕлĕх эмелпе тивĕçтернĕ пулсан, кăçал çак вăхăтра вĕсене 3 миллион тенкĕлĕх эмел çырса панă. Эмелсемпе тивĕçтересси те çĕршывра лайăхлансах пырать.

Сăмаха пĕтĕмлетсе, çакна çеç калатăп. Халăх сывлăхне сыхлас ĕçшĕн патшалăх укçа-тенкĕ шеллемест. Акă, мĕнре наци проекчĕн пĕлтерĕшĕ. Вăл халăхшăн ĕçлет, уншăн тăрăшать.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Автомобиль транспорчĕн ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе

# «Президент малашлăха пăхтарать»,–



терĕ автоçул саракан юлташĕсенчен самантлăха уйрăлса "146-мĕш номерлĕ ДЭП" усă акционерлă обществăн автобус водителĕ Юрий Фадеевич Алексеев. Асăннă организаци кăçал хăйĕн пĕтĕм вăйне Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Матикасси – Токшик автоçула асфальт сарассипе тимлерĕ. "ЧР Президенчĕ палăртнă утăмсем пурнăçа кĕрессе пирки иккĕленӳ çук. Пурте пĕр тĕллевлĕ ĕçлесен çывăхри икĕ çулта кашни ял патнех асфальт çулсем çитесси – пурнăç чăнлăхĕ. Çакна пурнăçласан ялсене те асфальт çулсем сарăпăр",– терĕ çул тăвакансен умри тĕллевĕсемпе паллаштарса тата хăйсен ĕçĕпе ял çыннисем епле кăмăллă пулнине уйрăммăн палăртса акционерлă обществăн çул-йĕр мастерĕ Юрий Васильев.

Пирĕн тĕп герой Юрий Фадеевич Алексеев вара çак акционерлă обществăра 5-мĕш çул автобус водителĕнче вăй хурать. Анчах çакă унăн пĕтĕмĕшле стажĕн пĕчĕк пайĕ кăна. Юра Совет Çарĕнче службăра тăнă хыççăн 1970 çулта Кӳкеçре водителе вĕреннĕ те автомашина рульне алăран вĕçертмен. Малтанах тăван ене килсе Мичурин яч. хис. хуçалăхра кивĕ ГАЗ-51 автомашинăпа ĕçлет, ыттисенчен кая юлмасăр тырă-пулă, утă-улăм, строительство материалĕсем турттарать. Çулсем иртнĕ май тăрăшуллă çамрăк водитель хуçалăха килнĕ çĕнĕ автомашинăсене те алла илет. 31 çул лăш канмасăр ĕçлет вăл тăван колхозра, тăрăшуллă ĕçпе тăван ял çыннисен чыс-хисепне тивĕçет.

Ĕçлекен çын малтан мала пăхать. Çапла вара Юрий Алексеев та юлашки 5 çулне çулйĕр строительствине халаллана. Хăйне çирĕплетсе панă автобуспа вăл рабочисене ĕçе турттарать.

– Водительте 36 çул ĕçлесе темĕнле пăтăрмах та курнă пулĕ, анчах вĕсенчен нихăшĕ те хам суйласа илнĕ водитель профессине хура сăрăпа сăрлаймаççĕ. Миçе пин çухрăма парăнтартăм-ши пĕтĕмпе? Хуравне параймастăп, анчах водитель ĕçĕ кашни çыншăнах пĕлтерĕшлине пĕр иккĕленмесĕр калайратăп, – терĕ хăйне саламласа каланă сăмахсемшĕн тав тунă май Сарчак ялĕнче пурăнакан Юрий Фадеевич Алексеев.

Водитель автобуса хускатса çула тухрĕ. Салонра – çул тăвакансем. Пурнăç кăларса тăратнă кун йĕркинчи ыйтура вĕсен ĕçĕн вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Эпир вара вĕсем умра тăракан ĕçсене тĕплĕ те вăхăтра пурнăçласса шанса юлатпăр. Шанни шанăçа ан çухаттăрччĕ çеç.

**А. ПЕТРОВ.**